# ШКУЛ ТУСĔСЕМ

**Калайкасси шкулне тимлекенсен канашне (попечительский совет) 2002 çултах йĕркеленĕ. Унăн тĕп тĕллевĕ – шкул пурнăçĕпе çыхăннă ыйтусене пурнăçлама пулăшасси (кам сĕнӳпе, кам çыхăнусемпе, кам укçатенкĕпе).**

Тимлекенсен канашĕн членĕсем пулăшнипе шкулта тĕрлĕ мероприятисем иртеççĕ, шкул та хăйĕн сăнсăпачĕпе çĕнелсе, илемленсех пырать. Хамăр шкула аталанма пулăшакансене пирĕн пурин те ятран пĕлмелле тесе шухăшлатпăр.

Çак тĕллевпе çитес кашни номерте ырă çынсен пурнăçĕпе тата вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе тарăнтарах паллаштарăпăр. Паян вара вĕсем çинчен кĕскен кăна çырса кăтартăпăр.

Ванеркин Николай Григорьевич – ПУП «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин директорĕ;

Рубцов Валерий Семенович – усламçă;

Данилов Юрий Вячеславович – «Волга» хуçалăхăн пуçлăхĕ;

Кондратьев Валерий Семенович – «Нива» хуçалăхăн пуçлăхĕ;

Михаил Николаевич Шишокин – «Восток» хуçалăхăн пуçлăхĕ;

Горланов Геннадий Семенович – Раççей хăмлаçисен ассоциацийĕн президенчĕ;

Васильев Михаил Васильевич – усламçă;

Федотов Александр Иванович – Çĕнĕ Шупашкарти çăкăр завочĕн пуçлăхĕ;

Федотов Валерий Иванович – «Чебоксары-Интурист» ХАП тĕп пуçлăхĕ;

Лебедев Геннадий Герасимович – Катькас ял тăрăхĕн пуçлăхĕ

т. ыт. те.

# СПОРТ КАЧЧИСЕМ

**Хĕл ларчĕ ĕнтĕ. Шап-шур кавир витĕннĕ тавралăх канлĕ ыйхăра. Анчах та «ыйхăра» тенипе спорта юратакансем килĕшесшĕнех мар. «Çитсе курар-ха ял пĕвисем çине е шкулти спорт площадкине, - теççĕ вĕсем. — Анса пăхар çырмана, кĕрсе тухар хула паркне — пур çĕрте те хаваслă сасă. Хăюллă та вăр-вар йĕлтĕрçĕсем ярăнаççĕ, савăнаççĕ».**

Чăн та çаплах. Сивĕ те, çилтăман та хăратмасть ачасене.

Кăçалхи çул йĕлтĕрçĕсемшĕн уйрăмах паллă. Акă 10 С класри Смирнов Алешăпа Степанов Костя Урала çити йĕлтĕрпе ярăнма, ăмăртусене хутшăнма тухса кайрĕç. Вĕсемпе пĕрле Виталий Моисеев тренер та çула тухрĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Виталий Тимофеевич çак маттур каччăсене тахçантанпах ăмăртусем валли хатĕрлет. «Тренировкăсене çулла та хĕллехи пекех irттерсе тăмалла. Унсăрăн чаплă та вăйлă йĕлтĕрçĕсем хатĕрлеймĕн»,- тет вăл.

Виталий Моисеевăн кĕçĕн ывăлĕ те питĕ маттур иккен. Вăл вара Раççей шайĕнче иртекен йĕлтĕр ăмăртăвĕсене хутшăнма тухса кайрĕ.

Çавăнпа та эпир пирĕн шкул ятне çĕклекен йĕлтĕрçĕсене питĕ кĕтетпĕр, çĕнтерӳпе таврăнасса шанатпăр.

Иккĕленмелли çук, пирĕн Калайкасси шкулĕнчи çамрăксемпе ачасем малашне те спортра та, пурнăçра та пысăк çитĕнӳсем тăвĕç.

АВРОРА,
Калайкасси шкулĕ.

# «УНСĂР ПУРĂНМА ПУЛАТЬ»

**Юпа уйăхĕн ĕçĕнче Муркаш районĕнчи Тивĕш тата Шупашкар районĕнчи Ишек шкулĕсем арçын ачасемпе хĕр ачасем хушшинче баскетбол выляссипе юлташла тĕл пулусем ирттерчĕç.**

Çав вăхăтрах Тивĕш шкулĕнчи аслă классем сиенлĕ йăла-йĕркесем пирки анкетăсем тултарчĕç, 7-11 классем — баскетбол ăмăртăвне хутшăнчĕç.

Чӳк уйăхĕн 18-мĕшĕнче районти Унсăр пурăнма пулать агитацие спектакль программине те Тивĕш шкулĕ тивĕçлĕ кăтартрĕ.

# ОЛИМПИАДĂСЕНЧЕ ТЕ МАТТУР...

**Нумайах пулмасть, чӳк уйăхĕн 3-мĕшĕнче, Муркаш шкулĕнче вырăс литера-турипе олимпиада иртрĕ.**

Пирĕн шкул чысне хӳтĕлеме 10С класри Марина Евдокимовăпа Настя Алексеева, 11-мĕш педагогика класĕнчи Ксюша Григорьевăпа Лариса Осипова тата 10-мĕш педагогика класĕнчен Инга Андреева кайрĕç. Пуринчен маттурри Инга пулчĕ. Вăл 27 ача хушшинче 4-мĕш вырăна тивĕçрĕ.



Вырăс чĕлхи олимпиади те хăйне нумай кĕттермерĕ. Чӳк уйăхĕн 11-мĕшĕнче ачасем хăйсен пĕлĕвĕпе ăмăртрĕç. 26 ача хушшинче 11П класри Лариса Осипова 2-мĕш вырăн йышăнма пултарчĕ, 9-мĕш класри Оля Кошкина 5-мĕш вырăн çĕнсе илчĕ, 11П класри Ксения Григорьева та хăйне тивĕçлĕ кăтартрĕ. Сăмах май, Ксюша акăлчан чĕлхипе иртекен олимпиадăна та кайма тивĕçрĕ, пĕлӳ шайĕ çӳллĕ пулнине район шайĕнче çирĕплетрĕ. 10С класри Таня Шарикова вара 4-мĕш вырăн çĕнсе илчĕ.

Олимпиадăсем кăçал пĕлтĕрхипе танлаштарсан питĕ ир иртеççĕ пулин те ачасене ку хăратмарĕ. Вĕсем хăйсен пĕлĕвне ытти шкул ачисемпе ăмăртса тĕрĕслеме шикленмерĕç. Ку 14-16 çулхи ачасемшĕн хăйне евĕр пысăк паттăрлăх.

Ытти олимпиадăсем те çывхараççĕ. Ачасем, хăвăр тарăн пĕлĕве, çивĕч ăса, тавçăрулăха кăтартма ан вăтанăр. Калайкасси шкулĕнче вĕренекенсене олимпиадăсенче тата тĕрлĕ конкурссенче малти вырăнсене çĕнсе илме телей, ăнăçу сунатăп.

Лариса ОСИПОВА
Калайкасси шкулĕ,
11П кл.

# ÇĔНТЕРӲÇĔ — КАЛАЙКАССИ ШКУЛĔ

**Кĕрхи каникул вăхăтĕнче Муркаш районĕнчи шкулсем пĕр-пĕринпе баскетболла выляссипе ăмăртрĕç.**

Малтан хĕрсем вăй виçрĕç. Пурĕ 14 команда пулчĕ. Калайкасси шкулĕ пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ, 2-мĕш вырăнта Муркаш шкулĕ, 3-мĕш вырăна Оринин шкулĕ тухрĕ. Тепĕр кун арçын ачасем ăмăртрĕç. Калайкасси шкулĕ çĕнтерӳçĕ пулчĕ. 2-мĕшпе 3-мĕш вырăнсене Муркашпа Оринин шкулĕсем пайларĕç.

***Пĕлме кăсăклă***

**БАСКЕТБОЛА 115 ÇУЛ**

1891 çулхи раштав уйăхĕн 2-мĕшĕнче Джеймс Нейсмит вĕрентекен пӳлĕмре вылямалли вăйă шухăшласа тупать. Залăн хире-хирĕçле стенисем çине футбол мечĕкне персе кĕртме персик валли карçинккасем çакать. Çапла майпа баскетбол вăйă тĕнчене килет.

Калайкасси шкулĕ районти информатикăна юратакан яшсемпе хĕрсем валли Эпир сывă пурнăçшăн электронлă ӳкерчĕксемпе презентацисен конкурсне ирттерет.

1-9-мĕш классенчи ачасем Paint е Corell Draw редакторĕсенче калăпланă ӳкерчĕксем, 10-11 классем — презентацисем хатĕрлеççĕ. Ĕçсене раштав уйăхĕн 20 - мĕшĕччен дискпа йышăнаççĕ. Лайăх ĕçсен авторĕсене парнесемпе Хисеп хучĕсем кĕтеççĕ.

Конкурсăн явапли — Калайкасси шкулĕн информатикăна вĕрентекенĕ Татьяна Ершова.

КОНКУРС
КОНКУРС
КОНКУРС
КОНКУРС



# PALLĂSEM, SAS PALLISEM, ALFAVIT TATA UNĂN ISTORIYĔ

**Çырулăха кам шутласа кăларни паллă мар, анчах та çак аслă уçăну питĕ меллĕ пулнипе çынсем халĕ те усă кураççĕ. Калăпăр, «Хыçалти парта» кăларнă чухне.**

**Эпир халĕ чăвашла вуншар пин сăмах çырма 37 сас паллипе ăнăçлăн усă куратпăр.**




Авалăхра вара çынсен хыпара пĕлтерес тесе ӳкерчĕксемпе тата алă хусканăвĕн чĕлхипе усă курма тивнĕ. 3-3,5 пин çул каялла кăна Малти Азинче пĕрремĕш сас паллисем тĕнчене килнĕ. Чи авалхи текст — Финики патшин Ахирам саркофагĕ çинчи. Çак çыруллăха кӳршĕ халăхсем те усă курма пуçланă. Пирĕн эрăччен 10-мĕш ĕмĕрте авалхи еврей халăхĕ çырулăх шутласа кăларнă, кайран — арамейсем. Пирĕн эрăччен 5-мĕш ĕмĕрте Арамей çырулăхне еврейсем илнĕ. Кайран вăл набатейсем патшалăхне куçнă. Мухаммед пророк çуралас умĕн набатейсен çырулăхĕнчен араб çырулăхĕ тухнă. Ислам тĕнĕ сарăлнă çемĕн çак çырулăхпа Азири нумай халăх усă курма тытăннă. Калăпăр, перссемпе турккăсем. Иранра |1935 çулччен вăл Перси ятпа пулнă| халĕ те араб çырулăхĕпе усă кураççĕ. 1928 çулта Турци араб çырулăхне пăрахăçласа латин графики çине куçнă. Семитсен çырулăхĕн пур ĕлкин те икĕ паллă пулнă. Сас паллисем хупă сасăсене кăна палăртнă, сăмахсем сылтăмран сулахаялла çырăннă. Семит çырулăхĕ кĕçех Тухăç тăрăх сарăлнă, Индине çитнĕ. Индийăцсем ун тытăмĕ çинче брахми çырулăхне никĕсленĕ. Пирĕн ĕмĕрччен IV - мĕш ĕмĕрте çак çырулăхпа усă курнă текстсем сыхланса юлнă. Брахми çырулăхĕнчен бенгал, тибет, бирма, тай, кхмер, яван, сингал алфавичĕсем тухнă. Вĕсенчен нумайăшĕпе паянхи кун та усă кураççĕ. Авалхи санскритра усă курнă девангари çыруллăхĕпе паянхи Инди официаллă чĕлхинче — хиндире — усă кураççĕ. Сирĕн умра девангари алфавичĕ пулнине пĕлме ансат — сăмах çийĕн тăршшĕпе йĕр каять.

Арамейсен алфавичĕн никĕсĕ çинче перс чĕлхи пехлеви тухнă. Ăна пирĕн эрăчченхи III-мĕш ĕмĕртенпе пирĕн ĕмĕрĕн V ĕмĕрĕ таран усă курнă. Çак çырулăхăн пĕр ĕлкине Месроп Маштоц епископ эрмен çырулăхне йĕркеленĕ чухне усă курнă. Арамейпе перс çыруллăхĕнчен грузи алфавичĕ тата монголсемпе уйгурсен çырулăхĕ амаланнă. XII ĕмĕрте уйгур çырулăхĕ Чингисхан империнче официаллă алфавит пулса тăнă. XIV ĕмĕрте ун никĕсĕ çинче монголсем хăйсен çырулăхне йĕркелесе яраççĕ. Монголсем çӳлтен аялалла çырнă, йĕркесем сулахайран сылтăмалла пулнă. Çак çырулăх иртнĕ ĕмĕрте кириллицăпа улшăннă. Тухăçра алфавита грексем чи пĕрремĕш никĕсленĕ. Пĕрремĕш грек сас паллисем финикийсен алфавитне аса илтернĕ, вĕсем пекех сылтăмран сулахаялла çырăннă. Вăхăт иртсен кăна çыру сулахайран сылтăмалла çырăнма пуçланнă. Сас паллисене лайăхлатнийĕ вара тата тепĕр темиçе ĕмĕре тăсăлнă. Ун хыççăн грексен алфавичĕ 2,5 пин çул улшăнман. Грексем уçă тата хупă сас паллисем çырма пуçланă.

Пирĕн ĕмĕрчченхи I-мĕш ĕмĕрте Аппенин çурутравĕ çинче этруск халăхĕ пурăннă. Этрусксем грексен алфавитне йышăнса хăйсен чĕлхипе 9 000 пине яхăн текст хăварнă.- Çак халăхăн çырулăхĕнчен латин алфавичĕ йĕркеленнĕ. Латин алфавичĕпепе халăхĕ пĕтнĕ пулин те, халĕ те усă кураççĕ. Цицеронпа Юлий Цезарь вĕсемпе усă курнă ĕнтĕ.

Эпир çитес номерсенче пĕринче руна çырулăхне тишкерĕпĕр. Çак çырулăхпа викингсем, нимĕçсем, авалхи чăвашсем т. ыт. те усă курнă.

Максим Васильев.




# ÇИТЕС НОМЕРТЕ:

- Сăпай шкул ачи Куçма Пайраш пултарулăхĕпе çырнă тĕпчев ĕçĕ;
- Кулăш, гороскоп, сирĕн пултарулăх;
- Кĕсье телефонĕн историйĕ;
- Пилотсăр вĕçекен разведчик самолет;
- Паянхи шкул мĕнле пулмалла? Çавра сĕтел;
- Автомобиль историйĕ;
- Чиперуксен кĕтесĕ



Хаçатра саламлас, статья кăларас тетĕр пулсан çырупа çак купона та ярса парăр.



**2 № купон**